# ЫЙТУ — ХУРАВ

## Куҫаруҫӑ, педагог, этнограф...

**Даниил Филимонович Филимонов... Кам вӑл? Мӗнле ӗҫпе историе кӗрсе юлнӑ?**

**А.ПРОКОПЬЕВ.**
Канаш районӗ.

Даниил Филимонов Ҫӗрпӳ районӗнчи Ямаш ялӗнче 1855 ҫулта раштавӑн 18-мӗшӗнче хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Хусанти учительсен семинарине пӗтернӗ. Чӗмпӗрти тӗп чӑваш шкулӗнче вӗрентнӗ, 1877-1881 ҫулсенче шкул хуҫалӑхне ертсе пынӑ. 1882 ҫулта тӗн ӗҫне кӳлӗннӗ. Малтанах Ҫӗрпӳ уесне кӗрекен Кавалта вӑй хунӑ, каярахпа шӑпа ӑна Мӑнҫырмана илсе ҫитернӗ. 1894 ҫулта ӑна Шупашкар районӗнчи Ишек салине пачӑшкӑна куҫарнӑ. Кунта вӑл Ҫветтуй Гурий ячӗллӗ икӗ класлӑ шкул уҫнӑ, ачасене Турӑ саккунӗсене вӗрентнӗ. 1902 ҫулта Даниил Филимонович Пӗкӗлме уесӗнчи Туарма салине ҫул тытнӑ. Вӑл тӑрӑхри 10 шкула пӑхса тӑнӑ. 1914 ҫулта ҫу уйӑхӗнче протоиерей санне тивӗҫнӗ. Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсен иккӗмӗш съездӗнче /1917 ҫулта/ ӑна Етӗрне епархийӗнчен чӑваш епископне суйлама кандидата тӑратнӑ. 1918 ҫулта Ӗпхӳ кӗпӗрнине, каярах Ҫӗпӗре тухса кайнӑ. 1920 ҫулхи юпа уйӑхӗнчен Пӗкӗлме уесӗнчи Кивӗ Афонькино салинче тиекре, унтан пачӑшкӑра ӗҫленӗ. 1924 ҫулхи кӑрлачӑн 19-мӗшӗнче Даниил Филимонов протоиерее Шупашкар епископӗ, Чӑваш епархийӗн викарийӗ пулма шаннӑ. Ишек салинчи чиркӳре аслӑ пупра ӗҫлеме пуҫланӑ. 1929 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗнче вӑл архиепископ пулса тӑнӑ. Ҫав ҫулах, юпа уйӑхӗнче, сывлӑхӗ хавшанине пула хӑйне Шупашкар викарийӗнчен хӑтарма ыйтса ҫырать. Кун хыҫҫӑн вӑл тӑван тӑрӑхра – Ямашра – пурӑнать, вырӑнти чиркӳре аслӑ пупра ӗҫлет. 1938 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 11-мӗшӗнче ҫӗре кӗнӗ.

Филимонов чӑваш халӑхне ҫутта кӑларас ӗҫре нумай вӑй хунӑ, общество деятелӗ, куҫаруҫӑ, вӗрентекен пулнӑ. Этнографипе кӑсӑкланнӑ. Тӗне кӗмен чӑвашсен ячӗсене, чӑваш юррисене ҫырса илнӗ. Темиҫе статья авторӗ. 1890 ҫулта «Мӑнҫырма салинчи хресченсен тумӗ тата хӗрарӑм капӑрӗ» статья ҫырнӑ. «Мӑнҫырма салинчи чӑваш туйӗ» ал ҫырӑвне вӑл Н.И.Ильминские ярса панӑ. Ҫавӑн пекех Даниил Филимонович чӑвашсен йӑли-йӗркине, уявӗсене, улах ларнисене, юмӑҫ пӑхнине ҫырса кӑтартнӑ. Вӑл тӗн кӗнекисене вырӑсларан чӑвашла куҫарнӑ, Н.В.Никольскипе туслӑ ҫыхӑну тытнӑ.

## Мата Хари — ташӑ ӑсти, шпион...

**Тӗнчипе палӑрнӑ Мата Хари шпионкӑн чӑн ячӗ мӗнле-ши? Унӑн кун-ҫулӗ пирки те пӗлес килет.**

**О.ПАВЛОВА.**
Сӗнтӗрвӑрри районӗ.



Мата Хари – Гертруда Маргарет Зелле – ташӑҫӑ, Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи вӑхӑтӗнчи паллӑ шпион. Вӑл 1876 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 7-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Мата Хари /малайзи чӗлхинчен куҫарсан – «ҫӗнӗ кун ҫути»/ Европӑра XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче палӑрнӑ. Вӑл инди тата яппун ташшисене ӑста ташланӑ. Хӑйне Ост-Индири ташӑҫӑ хӗрӗ тесе ҫирӗплетнӗ, Парижри, Монте-Карлори, Берлинри, Венӑри, Миланри тата Мадридри ҫав вӑхӑтри чи паллӑ залсенче ташланӑ. Мата Хари Европӑри чи хаклӑ куртизанка шутланнӑ.

Тӗнчере унӑн ячӗ пачах урӑх енӗпе сарӑлнӑ: Парижри чи хитре хӗрарӑм арҫынсен пуҫне самантрах ҫаврӑнӑ, тимлӗхе ҫухатнӑскерсем патшалӑх вӑрттӑнлӑхӗсене уҫса панӑ. Шӑпах ҫакӑ хӗрарӑмӑн вилӗмне ҫырхартнӑ: Германи майлӑ тунӑ шпионла ӗҫсемшӗн айӑпласа 1917 ҫулхи юпа уйӑхӗн 15-мӗшӗнче вӗлернӗ. Чылай историк шухӑшӗпе – Мати Харие сӑлтавсӑр айӑпланӑ. Вӑл тупнӑ хыпарсем усӑ кӳни иккӗлентерет. Анчах Мати Харие пурӑннӑ чух вылянӑ хӑюллӑ разведчик сӑнарӗ чапа кӑларнӑ. 1932 ҫултах ун пирки фильм /тӗп рольте Грета Гарбо/ ӳкернӗ. Паян адвокатсем Францин ҫар сучӗ суя фактсемпе усӑ курнӑ тесе ҫирӗплетеҫҫӗ. Мата Хари чӑнласах Германи тата Франци элитинчен укҫа «шӑйӑрнӑ», анчах нихӑҫан та информацие сутман. Адвокатсен шухӑшӗпе – Мати Харипе ҫыхӑннӑ суд кӑтартуллӑ иртнӗ: Францин ятарлӑ службисем чаплӑ ӗҫленине уҫса пама кирлӗ пулнӑ ҫакӑ. Урӑх сӑлтав та пур: ахаль французсене вӗсен тӑванӗсем вӑрҫӑра ҫапӑҫса пуҫ хунӑ вӑхӑтра Парижӑн пуян ҫыннисем алхасса пурӑнни тарӑхтарнӑ.

## Юррисем чуна тыткӑнлаҫҫӗ...

**Тимофей Фандеев чӑваш композиторӗн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ пирки пӗлесчӗ. Вӑл хайланӑ юрӑсене кӑмӑлласа итлетпӗр...**

**Анна ПЕТРОВА.**
Канаш районӗ.

Пулас композитор 1918 ҫулта Чикме уесӗнчи /халӗ Етӗрне районӗ/ Кӗҫӗн Тӳмерле ялӗнче ҫуралнӑ. Чӑваш музыка училищин вокал уйрӑмне, Хусан консерваторине пӗтернӗ. Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче баянистра, Чӑваш радиовӗн музыка хыпарлавӗн редакторӗнче, заводӑн «ЧАССР: 30 ҫул» клубӗн юрӑпа ташӑ ансамблӗн илемлӗх ертӳҫинче, республикӑри Халӑх пултарулӑх ҫурчӗн директорӗнче, И.Я.Яковлев ячӗллӗ ЧППИ аслӑ преподавателӗнче ӗҫленӗ, Чӑваш Ен композиторӗсен канашӗн консультанчӗ пулнӑ.



Тимофей Игнатьевич юрӑ жанрӗнче те палӑрнӑ. В.Урташ, В.Давыдов-Анатри, Н.Евстафьев, Ю.Петров, П.Хусанкай тата ыттисен сӑввисемпе 100 юрӑпа романс хывнӑ.

Тимофей Игнатьевич музыкӑпа ачаран кӑсӑкланнӑ. Унӑн пултарулӑхӗнче кӗвӗ ирӗклӗн аталанать, наци туйӑмӗ палӑрать. 13 ҫултах вӑл Г.Тал-Мӑрсан «Вӑйлисен айӑпӗ» хайлавӗ тӑрӑх кӗвӗ ҫырнӑ.

Т.Фандеев сюитӑсем, музыка комедийӗ, увертюрӑсем, оперӑсемпе опереттӑсем, балетсем, баян, альт концерчӗсем хайланӑ. Паллӑраххисем: «Нарспи» опера, «Телей» оперетта, «Кай, кай Ивана», «Виҫӗ туй» камитсем, «Иван Яковлев» кантата, «Тӑван енре» поэма, «Ҫӗнтерӳҫӗсене мухтав» марш, «Телей чечекӗ» балет.

Нумай ҫул тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн, музыка культурине пысӑк тӳпе хывнӑшӑн Т.Фандеева ЧАССР, РСФСР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗн хисеплӗ ятне панӑ. Чӑваш Ен Патшалӑх пичет архивӗн фондӗнче унӑн 16 нота хайлавӗ, пултарулӑхӗпе паллаштаракан 20 ытла статья упранать.

## Тӗне кура — телефон

**Тӗрлӗ тӗне ӗненекенсем валли хӑйне евӗр телефон шухӑшласа кӑларнӑ теҫҫӗ. Вӑл ахальлинчен мӗнпе уйрӑлса тӑрать?**

**В.САВЕЛЬЕВ.**
Комсомольски районӗ.

Карас телефонӗ туса кӑларакансем тӗрлӗ тӗн ҫыннисен кӑмӑлне аван чухлаҫҫӗ, хӑйсен ӗҫӗнче вӗсен йӑли-йӗркине тӗпе хураҫҫӗ. Иудейсен телефонӗ урлӑ Интернета тухма, СМС ҫырма, эротика сервисӗпе усӑ курма май килмест. Шӑмат кун – ҫветтуй кун, ӗҫлеме юрамасть – чи хаклӑ тарифпа кӑна шӑнкӑравлама пулать. Мӑсӑльмансем валли Мекка тӗлне кӑтартакан телефонсем пур. Ҫакӑ вӗсене тӗрӗс вырӑнта кӗлӗ вулама пулӑшать.

## Симӗс туталлӑ дикторсем

**Телекурав дикторӗсем малтанхи тапхӑрта мӗншӗн симӗс писевпе сӑрланнӑ?**

**Екатерина.**
Вӑрмар районӗ.



Хурашурӑ телекурав ӗмӗрӗнче камерӑра часчасах хӗрлӗ фильтрпа усӑ курнӑ. Ҫавна май хӗрлӗ писев телевизор экранӗ ҫинче тӗксӗм курӑннӑ. Дикторсемпе актерсем симӗс тӗспе сӑрланнӑ.

## «Хура ешчӗк»

**Авиацин мӗнле хатӗрӗн ячӗ халӑхра анлӑ сарӑлнипе тӳр килмест?**

**И.ПОТАПОВ.**
Хӗрлӗ Чутай районӗ.

Самолет бортӗнче мӗн пулса иртнине, экипаж калаҫӑвне, приборсен кӑтартӑвне ҫырса пыракан хатӗре чылай чух «хура ешчӗк» теҫҫӗ. Тӗрӗссипе вӑл тӑваткал мар – ҫаврака, шар е цилиндр евӗрлӗ. Тӗсӗ те хура мар. Авари вӑхӑтӗнче тӳрех асӑрхаса тупма ҫӑмӑлрах пултӑр тесе – хӗрлӗ е хӗрлӗрех сарӑ.

## Ӳт-пӳ тӗлӗнтермӗшӗсем

**Ҫын организмӗнче тӗлӗнтермӗш сахал мар. Эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, сӑмахран, ӳпке витӗр минутра 5-9 литр сывлӑш тухать. Этем ӳт-пӗвӗ 45 градус вӗрие те чӑтма пултарать иккен. Ӑсчахсем ҫирӗплетнӗ ҫакӑн евӗр самантсем тата пур-ши?**

**А.КРАСНОВА.**
Шӑмӑршӑ районӗ.

Эритроцитсене юнашар хурса тухсан ҫӗр чӑмӑрне виҫӗ хут ҫавӑрса илме ҫитет. Ҫын кӗлеткинче 100-160 млрд вӗтӗ юн тымарӗ. Вӗсене пӗр йӗрпе 60-80 пин ҫухрӑма ҫити хурса тухма пулать. Ҫакӑ экватор тӑршшӗнчен икӗ хут вӑрӑмрах. Этем талӑкра 33 литр пӑрлӑ шыва вӗреме кӗртмелӗх ӑшӑ кӑларать. Ҫын 60 ҫултан ҫирӗмӗшне ҫывӑрса ирттерет. Юнри хӑш-пӗр элементсен виҫи нихӑҫан та улшӑнмасть. Сӑмахран, белок – 5-8 процент, сахӑр – 0,07-0,12 процент, тӑвар – 9,9. Кали, натри, кальци виҫи те ҫирӗп йӗркене пӑхӑнать. Ҫитӗннӗ ҫыннӑн кӗлеткинче юн 20-28 ҫеккунтра ҫаврӑнать, ачан – 15 ҫеккунтра, ҫамрӑксен – 18 ҫеккунтра. Талӑкра кӗлетке тӑрӑх 1,5-2 пин хутчен ҫаврӑнма ӗлкӗрет. Пӗвер урлӑ минутра 1,5 литр юн «чупса» иртет. Талӑкра – 2000 литра яхӑн. Пуҫ мимин клеткисенче 80 процента яхӑн шыв, мышцӑра – 76 процент, шӑмӑсенче – 25 процента яхӑн. Ҫын ҫӳҫӗ супӑнь хӑмпинчен 5000 хут хулӑнрах, юн тымарӗнчен – 5 хут, эрешмен картинчен – 20 хут. Этем хӑйӗн ӗмӗрӗнче 2,5 тонна белок, 1,3 тонна ҫу, 17,5 тонна углевод ҫиет, 75 тонна шыв ӗҫет. Ӳт-пӳре 3 килограма яхӑн минерал тӑварӗсем, ҫав шутран 5/6 пайӗ шӑмӑсен тытӑмӗнче. Ҫитӗннӗ ҫын организмӗнче 300 грама яхӑн апат тӑварӗ шутланать.

Авалхи Грецире ҫын вӑтамран 29 ҫул пурӑннӑ, XVI ӗмӗрте Европӑра – 21, XVII ӗмӗрте – 26, XVIII ӗмӗрте – 34, XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче – 50 ҫула яхӑн, XX ӗмӗр варринче – 70 ҫул ытла, XX ӗмӗр вӗҫӗнче – 60 ҫула яхӑн.

## Тӗпре — Бетховен симфонийӗ

**Компакт-диск йышӑнма пултаракан вӑхӑта мӗнле майпа палӑртнӑ?**

**А.КИРИЛЛОВ.**
Хӗрлӗ Чутай районӗ.

Компакт-диск йышӑнма пултаракан информаци калӑпӑшне Японире шухӑшласа кӑларнӑ. Вӑл Бетховенӑн тӑххӑрмӗш симфонийӗ – «Сони» вице-президенчӗн юратнӑ хайлавӗ – чухлӗ. Диск вӑхӑчӗ 74 минут пулма тивӗҫ. Анчах техника сӑлтавӗсене пула вӑл симфони вӑхӑтӗнчен ҫур минут кӗскерех.